ЧЫСЛАВ

# Ҫӗнӗ лауреатсене хисеп турӗҫ

**Кӑҫалхи нарӑс уйӑхӗн 20-мӗшӗнче ҫепӗҫ туйӑмлӑ сӑвӑсем ҫырса чӑваш халӑхӗн асне кӗрсе юлнӑ мухтавлӑ ентешӗмӗр — Нестер Кириллович Ефимов-Янкас поэт ҫуралнӑранпа 108 ҫул ҫитрӗ. Хӑй "тимӗр тылӑ" айне лексе, тӗрлӗ ҫӗрте асапланнӑскер, Анат Тагил хулинчи лагерьте 33 ҫултах — 1942 ҫулхи раштав уйӑхӗн 27-мӗшӗнче вилнӗ пулсан та, пултарулӑхӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ манӑҫмасть. Акӑ, 1989 ҫул вӗҫӗнче Трак енре ун ячӗллӗ культурӑпа искусство тата литература пӗрлӗхӗ чӑмӑртаннӑ. 1990 ҫултан тытӑнса малалла палтарулӑхӑн тӗрлӗ енӗпе палӑрнисене Н. Янкас ячӗллӗ премипе чыслаҫҫӗ. Халӗччен ку чыса уйрӑм 62 ҫынпа 18 пултарулӑх ушкӑнӗ тивӗҫнӗччӗ. Кӑҫал вара ҫак йыша тата пултарулӑхӑн 5 ҫынни хушӑнчӗ.**

В. ДАНИЛОВ,
районти Н. Янкас ячӗллӗ культурӑпа искусство тата литература пӗрлӗхӗн правленийӗн членӗ, Н. Янкас ячӗллӗ преми лауреачӗ

Ҫӗнӗ лауреатсене ҫак кунсенче районти Культура ҫуртӗнче хисеп турӗҫ. Чыслава районти Н. Янкас ячӗллӗ культурӑпа искусство тата литература пӗрлӗхӗн правленийӗн председателӗ И. Прокопьев уҫрӗ. "Паянхи куна Н. Янкас кунӗ тесе пӗлтерсен те, йӑнӑш пулас ҫук", — палӑртрӗ Иван Афанасьевич. Чыслав кӑҫне хутшӑннисене ҫавӑн пекех район администрацийӗн пуҫлӑхӗ С. Молотков тата Чӑваш наци конгресӗн районти уйрӑмӗн ертӳҫи З. Михайлова ыр сунчӗҫ. Сергей Львовичпа Зинаида Петровна чӑвашлӑха аталантарас, район историне пуянлатас енӗпе тимлекенсем яланах хисепре пулнине пӗлтерчӗҫ.

Унтан Н. Янкас ячӗллӗ премине парас тӗлӗшпе ӗҫлекен комисси председательне В. Михайлова сӑмах пачӗҫ. Виталий Михайлович комисси ларӑвӗн протоколӗпе паллаштарчӗ. Ҫапах та камсем-ха 2016 ҫулшӑн ку премине тивӗҫнӗ ҫӗнӗ лауреатсем?

Акӑ вӗсем:

1. **ТАТЬЯНА ИВАНОВНА БОРИСОВА** сӑвӑҫ, публицист тата общество корреспонденчӗ. Супар ялӗнче 1963 ҫулта ҫуралнӑ. Чӑваш Республикинчи тавраҫӗлӳҫесен районти уйрӑмӗ тӑратнӑ (кӑҫра ун пирки асӑннӑ уйрӑм ертӳҫи В. Константинов, мӑшӑрӗ — Ю. Борисов, РФ тата ЧР тава тивӗҫлӗ учителӗ Г. Андреева, йӑмӑкӗ — Надежда Ивановна ӑшӑ сӑмахсем каларӗҫ).

2. Йӗпреҫ районӗнчи "Ҫӗнтерӳшӗн" хаҫатӑн ял хуҫалӑх пайӗн редакторӗ **ГЕННАДИЙ ВАСИЛЬЕВИЧ КУЗНЕЦОВ** сӑвӑҫ-журналист. 1943 ҫулта Канаш районӗнчи Ҫӗнӗ Шуртан ялӗнче ҫӗр ҫине килнӗ. Ҫичӗ ҫула яхӑн пирӗн районти "Ял пурнӑҫӗ" хаҫатра (ӑна шӑпах ҫак хаҫат редакцийӗ тӑратнӑ) вӑй хунӑ, унпа халӗ те тачӑ ҫыхӑну тытать (Геннадий Васильевич пултарулӑхне хаклама "Ял пурнӑҫӗ" хаҫатӑн пай редакторӗсем В. Даниловпа Ю. Борисов тата общество корреспонденчӗ Н. Ершов-Янгер сӑмах илчӗҫ).

3. Чӑваш наци библиотекин тӗп библиотекарӗ **ВЕРА СЕВАСТЬЯНОВНА АРХИПОВА** Ҫӗмӗрле районӗнчи Юманай ялӗнче 1962 ҫулта ҫуралнӑ. Амӑшӗ — пирӗн районти Тусайран. Ҫӗр ҫул ытла кунта пурӑннӑ Кӳҫҫа мучи (А. А. Александров) мӑнукӗ. Ӑна "Трак ен" ентешлӗх тӑратнӑ ( чыславра пултарулӑхне ырласа "Трак ен" ентешлӗхӗн правлени председателӗ А. Львов, Чӑваш наци радиовӗн аслӑ редакторӗ Р. Деменцова (Тусай ялӗнчен) каларӗҫ).

4. **АЛЕКСАНДР АНАТОЛЬЕВИЧ КАЗАКОВ** художник-оформитель. Вӑрмар районӗнчи Шӑхаль ялӗнче 1967 ҫулта кун ҫути курнӑ. Заволжски ЛПУМГри профсоюз комитечӗ тӑратнӑ (ун пирки ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ П. Владимирова ӑшӑ нумай сӑмах каларӗ).

5. **НАДЕЖДА АНДРЕЕВНА ФИЛИППОВА** культура ӗҫченӗ, районти Культура ҫуртӗн ертсе пыракан менеджерӗ. Шупашкар районӗнчи Иккасси ялӗнче 1969 ҫулта ҫуралнӑ. Ӑна тӑратакансем— культура ӗҫченӗсем (ун ҫинчен пӗрле вӑй хуракан Н. Никоноров — ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ — чарӑнса тӑчӗ).

Кӑҫра ҫӗнӗ лауреатсене тивӗҫлипе чысларӗҫ: медаль (сӑмах май, ӑна хамӑр ентеш — Ҫӗньял Упи ялӗнче ҫуралнӑ ЧР тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, Н. Янкас ячӗллӗ премине 2008 ҫулшӑн панӑ А. Яковлев журналист эскизӗпе туса хатӗрленӗ), Диплом тата парнесем пачӗҫ.



Ҫӗнӗ лауреатсемпе пӗрле.

Унтан уяв концерчӗ пулчӗ. Хайсен пултарулӑхӗпе куракансене районти Культура ҫуртӗ ҫумӗнчи ветерансен хорӗ, Кӗҫӗн Шетмӗри "Ҫӑлкуҫ" ансамбль, "Трак ен" халӑх фольклор ушкӑнӗ, уйрӑм юрӑҫсем — А. Федорова, Л. Григорьев, В. Чернов, Г. Яковлев, А. Сергеева савӑнтарчӗҫ.



Сӑнӳкерчӗксене В. Данилов ӳкернӗ

"Ҫӑлкуҫ" ансамбль (Кӗҫӗн Шетмӗ) юрлать.